Экономика

Пĕчĕк хуçалăх формисен аталанăвĕ

Пĕчĕк тата вăтам предпринимательство район экономикин аталанăвĕпе унăн ӳсĕмĕнче хăйĕн вырăнне тупрĕ ĕнтĕ. Иртнĕ çул вĕсем 221 миллион тенкĕлĕх (пĕтĕмĕшле калăпăшăн 33 проценчĕ) продукци туса кăларнă.

Вăтам ĕç укçи пирки те пĕчĕк тата вăтам предприятисенче япăх мар. Иртнĕ çул вăл вĕсенче вăтамран 7100 – 7500 тенкĕпе танлашнă. Çакă кашни çын пуçне тивекен пурăнмалли чи пĕчĕк укçа виçинчен самай пысăк. Апла пулин те пĕчĕк тата вăтам предприятисенче ĕçлекенсене ĕç укçи тӳлессине ведомствăсем хушшинчи оперативлă комисси пăхсах тăрать. Иртнĕ çул вĕсем 23 предприятие ĕç укçи ыйтăвĕпе итлессипе 7 канашлу ирттернĕ.

Пĕчĕк тата вăтам предпринимательствăна аталантарма пулăшасси те малти вырăнта. Çак пулăшун пĕр енĕ вăл – илнĕ кредитăн процент ставкисене субсидилесси. Паян çак пулăшупа пĕчĕк бизнесăн 5 представителĕ усă курать.

Пĕчĕк хуçалăх формисене аталантарма патшалăх пулăшасси тăрать. Акă «Моргаушагропромснаб» базинче производство бизнес-инкубаторĕ йĕркелеме иртнĕ çул конкурс комиссийĕн йышăнăвĕпе федераллă бюджетран 444 пин тенкĕ тата республика бюджетĕнчен 299 пин тенкĕ тĕллевлĕ финанслама пăхрăмăр. Ку укçатенкĕне çурт-йĕре капиталлă юсама уйăртăмăр.

Производство бизнес-инкубаторăн тĕп задачисем çаксем пулаççĕ:

– инновациллĕ пĕчĕк предприятисене вырнаçтарма материалпа техника бази йĕркелесси;

– хăйсен ĕçĕсене пуçлакансем валли пуçламăш условисем туса парасси;

– пĕчĕк тата вăтам предприятисене хăйсене кирлĕ услугăсемпе çителĕклĕ усă курма май парасси;

– бизнес-инкубатора потенциаллă партнерсемпе ĕçлеме эффективлă условисем туса парасси;

– çĕнĕ ĕç вырăнĕсем уçасси;

– предпринимательство ĕçĕ-хĕлĕн профессиллĕ шайне ӳстересси.

«Харпăр хăй бизнесне пуçарса яракан пĕчĕк предпринимательство субъекчĕсене грантсем уйăрса парасси» йĕркепе иртнĕ çул пирĕн районти пĕчĕк бизнесăн икĕ представителĕ федераллă бюджетран 532 пин тенкĕ укçана тивĕç пулчĕ.

Асăннă конкурс кăçал та пулать. Унта хутшăнас текенсен февралĕн 18-мĕшĕччен ЧР Экономика министерствине заявкăсем тăратмалла. Çакна валли ыйту пуррисем район администрацийĕн экономика пайне кĕрсе тухма е 63-2-45 телефонпа шăнкăравласа пĕлме пултараççĕ. Хапăл тăвакансене хаваспах кĕтетпĕр.

Финанспа экономика кризисне пăхмасăрах потребительсен рынокĕ малаллах аталанать. Çак вăхăтра районта суту-илӳ тата обществăлла апатлану предприятийĕсем 13 уçăлчĕç. Вĕсенче çĕнĕрен 28 ĕç вырăнĕ йĕркеленчĕ. Инвестици хушăмĕсен калăпăшĕ 11,8 миллион тенкĕне çитрĕ. Пĕтĕмĕшле тавар çаврăнăшĕ иртнĕ çулхи шайрах курăнать пулсан, ун шайĕнчи пĕчĕк бизнесăн виçи 21 процентпа танлашрĕ.

Пĕчĕк тата вăтам предпринимательство субъекчĕсене муниципаллă заказсем вырнаçтарма пур условисене те туса пама тăрăшнă. Çапла вара иртнĕ çул пĕчĕк бизнес ĕçченĕсенчен муниципаллă ĕç-хĕл валли 50,3 миллион тенкĕлĕх тавар-семпе ĕç-хĕл туяннă. Ку вăл пĕтĕмĕшле контрактсен суммин-чен 26 процент пулать.

Январĕн 1-мĕшĕ тĕлне район территорийĕнче вырнаçнă 32 предприятин алкоголь продукцийĕ сутма лицензи пулнă. Вĕсенчен 30-шĕ – пĕчĕк тата вăтам предпринимательство субъекчĕсем. 2006 çултанпа асăннă продукципе суту-илӳ тума ЧР экономика министерстви лицензи парать. Тĕрĕслесе тăракан тата йĕркелĕхе сыхлакан органсемпе пĕрле пулса ĕç ушкăнĕ лицензи ыйтнине епле пурнăçланине тĕрĕслесех тăрать. Алкоголь продукцийĕ сутма лицензи илнĕ предприятисем вăрттăн продукци сутнă фактсем иртнĕ çул пулман.

Район администрацийĕ çумĕнче пĕчĕк хуçалăх формисене аталанма пулăшакан координациллĕ канаш ĕçлет. Пĕлтĕр вăл 4 лару ирттернĕ. Вĕсемсĕр пуçне бизнес технологийĕн шкулĕпе тата ытти тĕрĕслекен органсемпе пĕрре мар семинар-канашлусем пулнă. Вĕсем çинчен те, пĕчĕк предпринимательство ĕçĕхĕлĕ пирки те район хаçатĕнче çырса-пичетлесех тăнă.

Пĕчĕк бизнес представителĕсем район пурнăçĕнче активлăхпа палăраççĕ, вĕсем район тата республика шайĕнчи конкурссене те хутшăнаççĕ. Тĕслĕхрен, пĕлтĕр республикăра ирттернĕ «Мăнкун тĕлĕнтермĕшĕ - 2009» конкурсра «Чи лайăх Мăнкун кулачи» номинаци çĕнтерӳçи «Сундырь-Хлеб» чикĕллĕ яваплăхлă общество пулса тăчĕ.

Иртнĕ çул районти 5 предприниматель республика шайĕнче ирттернĕ «Çулталăкри чи лайăх предприниматель» конкурса хутшăнчĕ. «Чи лайăх пĕчĕк предприяти» номинацире «Декор» чикĕллĕ яваплăхлă общество çĕнтерчĕ.

«Çулталăкри хĕрарăм-директор» конкурса районтан виççĕн хутшăнчĕç. Галина Анисова «Творчествăлла натура» номинаци çĕнтерӳçи пулса тăчĕ пулсан, Эльвира Кадыкова индивидуаллă предприниматель «Çамрăк директор» номинацире малти пулчĕ.

Регионсем хушшинчи алăпа ăсталанă теттесен выставкинчен М. Пушкарева ăстаçă çĕнтерӳпе тавраннĕ.

ЧР Экономика аталанăвĕн министерстви тăрăшнипе пĕлтĕр йывăçран тĕрлĕ кĕлеткесем касса кăларассипе республикăри конкурссенче пĕрре мар çĕнтерӳпе палăрнă пирĕн ентеше Петр Мазуркина халалласа ӳкерчĕксемлĕ «Халăх ал ĕç ăстисен опытĕнчен» кĕнеке кун çути курчĕ.

Район экономикин аталанăвĕ пĕр вырăнта тăмасть. 2010 çулта вăл тата сумлăрах утăмсем тăвасса шанса тăратпăр.

Э. СИМАКОВА,
район администрацийĕн экономика пайĕн пуçлăхĕ.

«01» пĕлтерет, асăрхаттарать

Кăмака çурăкне хут чиксен...

Шартлама сивĕсемлĕ кăрлач уйăхĕ хыçала юлчĕ. Кунсем вăрăмланчĕç пулсан та, сивĕсем пирĕн патăмăртан халех иртесси пирки шутламалли çук. Çавăнпа асăрханулăха тата пушар хăрушсăрлăх правилисене çирĕп пăхăнассине никамăн та иккĕмĕш вырăна хăварма юрамасть. Çапла калатпăр-ха та, анчах...

Кăрлачăн 28-мĕшĕнче кăнтăр иртсен пирĕн патăмăра Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕнчи Мăн Хураçкара уйрăм çыннăн пурăнмалли килĕнче пушар тухни пирки пĕлтерӳ çитрĕ. 37-мĕш номерлĕ пушар чаçĕн Мăн Сĕнтĕрте вырнаçнă уйрăм посчĕн пушар хуралĕ сийĕнчен инкек тӳсекенсем патне васкарĕ. Вĕсем вăхăтра çитни «хĕрлĕ автана» вăй илме парайман. Анлă сарăлайман пушарта пĕрлехи вăйпа пурăнмалли çурта пĕтĕмĕшле сыхласа хăвартăмăр. Ирĕке кайнă вут-çулăмра пӳртри пурлăх çеç сиенленчĕ. Инкек сăлтавне тĕпчени куç умне кил хуçисем яваплăх пирки пач маннине кăтартса пачĕ. Ялти кил-çуртпа дача вырăнне усă курнă кил хуçисем шартлама сивĕрен «пытанма» кăмака хутса яраççĕ. Çу каça юсаман кăмака унтан-куртан çурăлса кайса пĕтнине пула пӳрте тĕтĕм кăларма пуçласан, çакскерсем кăмака хушăкĕсене... хаçатпа питĕреççĕ, çиелтен... утиялпа витеççĕ. Çапла вара «хĕрлĕ автан» валли йăва хатĕр те. Пушар хăрушсăрлăх правилисене сĕмсĕррĕн пăснă кил хуçисен саккун умĕнче явап тытма тиврĕ, анчах...

Пулса иртнĕ инкек вут-кăвар шӳте юратманнине, унпа питех асăрхануллă пулмаллине яр уççăн çирĕплетсе парать. Пĕтĕмлетсе каласан, иртнĕ уйăхра районта 5 пушар пулчĕ тата çулăм тухнă 4 тĕслĕх. Пушарсем пĕлтĕрхинчен пĕр тĕслĕх нумайрах.

И. СМИРНОВ,
патшалăх пушар надзорĕн районти уйрăмĕн ертӳçи.

Тăван тавралăх

Йывăç тĕмĕсем шурă юр тыткăнĕнче...
А. БЕЛОВ сăн ӳкерчĕкĕ.

Хурт-хăмăр ăстисем валли

Утарти сивĕ хĕл кашнинех шутлаттарать

Хĕл кунĕсем – пуриншĕн те хăйне евĕр тĕрĕслев. Шартлама сивĕсем çу кунĕсене кам епле ирттернине питĕ тĕплĕ тĕрĕслеççĕ. Çак тĕрĕслев – утарçăсемпе пыл хурчĕсемшĕн те.

Вăтам вăй-халлă пыл хурчĕсен çемйи хĕлĕн пĕрремĕш çурринче (нарăсăн пĕрремĕш вунă кунлăхĕччен) талăксерен 30-45 грамм е уйăхне пĕр килограма çити апат пĕтерет. Пирĕн регионпа илсен, пыл хурчĕсем çуркуннене тухиччен 8-10 килограмм апат çиеççĕ.

Вăрăма тăсăлнă (икĕ уйăха яхăн) кăçалхи сивĕсем пыл хурчĕсемшĕн те синкерлĕ пулма пултараççĕ. Мĕншĕн тесен ытти çулхисене пăхса хăварнă апат саппасĕ çителĕксĕртерех пулма пултарать. Уйрăмах ятарлă пӳлĕмсенче хĕл каçарман çемьесемшĕн.

Раштав уйăхĕнчи сивĕсене пула пыл хурчĕсем хăйсене панă апата ытти çулхисенчен 2-3 хут ытларах пĕтерчĕç. Çакна кура вĕсен апат саппасĕ те сахалланчĕ. Вăл йĕркеллĕ хĕл каçма çителĕксĕрри хуртсем вилесси патне илсе пыма пултарать. Çавăнпа та хуртсене çăва кăлариччěнхи вăхăт – вĕсен хуçисемшĕн чи йывăрри.

Вĕллери пыл хурчĕсен çăмхи сивĕне пула çирĕпрех пăчăртанса ансăр çулпа хăй айĕнчи апата çисе рамкăн çӳлти пайне хăпарса çитет. Малалла вара – апат çук... Çакăнта вара вĕсене пулăшма чуста евĕр канди вырăнлă. Вăл – пыл хурчĕсене выçлăхран çăлмалли пĕртен-пĕр çул.

Вăрманлă вырăнсенче пыл пуçтарнă çемьесен саппасĕнче иртнĕ çу кунĕсенчи шăрăха кура суя пыл (падевый мед) пурри палăрать. Унпа апатланни пыл хурчĕсене токсикоз патне çитерет.

Çӳлерех каланине шута илсе тата вĕлле хурчĕсен çемйисене сыхласа хăварас тĕллевпе пыл хурчĕсен апачĕн саппасне хушмалла пулать. Çакна валли сахăрпа пыл кандийĕ аван. Ăна пыл хурчĕсене парас умĕн чир-чĕртен сыватмалăх тата чирлесрен асăрханмалăх ноземат хушни юрăхлă. Кунашкал апат хутăшне хуртхăмăр ăстисемпе пыл хурчĕ ĕрчетес ĕçе хальтерех кӳлĕннисем «Хурт-хăмăр агентстви» уçă акционерлă обществăн районсенчи суту-илӳпе хатĕрлев пункчĕсенче туянма пултараççĕ. Çак кандипе усă курмалли вăхăт – ăна хатĕрленĕренпе 90 талăк хушши.

Пыл хурчĕсен вуншар-çĕршер çемйине сыхласа хăваракан препарата утарçă хăй те килти условисенче хатĕрлейрет. Апатра сахăрăн муклашкисем пулмалла мар тата пыл нормăпа пăхнă чухлĕ пулмалла. Ахальлĕн канди хăвăрт хытать, пыл хурчĕсене апатланма юрăхсăр пулать.

Манмалла мар, канди хатĕрлемелли рецепта пăснă эмел пыл хурчĕсен сывлăхĕшĕн хăрушлăх кăларса тăратать.

Çакна та асра тытмалла. Канди хатĕрлеме илекен пылăн лаборатори тĕпчевĕ витĕр тухмалла. Ахальлĕн пылри чир-чĕр пыл хурчĕсене инфекци чирĕсем «парнелеме» пултарать.

Сивĕ кунсенче те вĕлле хурчĕсен вĕллисене пăхма манмалла мар. Вилнĕ хуртсене, шăтăксене пуçтарăннă пăрпа юра тасатсах тăмалла.

Районти хурт-хăмăр ăстисен черетлĕ канашлăвĕ мартăн 18-мĕшĕнче «Моргаушавтотехсервис» предприятин актовăй залĕнче пулать.

Г. МАКСИМОВ,
«Хурт-хăмăр агентстви» уçă акционерлă обществăн генеральнăй директорĕ, ял хуçалăх наукисен кандидачĕ.

Следствии комитетĕнчен

Пурнăçлани лăпланмалли сăлтав мар

Черетлĕ çулталăк пуçланнă май Етĕрнери районсем хушшинчи следствии пайĕ те хăйĕн 2009 çулхи ĕçĕсене пĕтĕмлетрĕ. Малтанах çакна каласа хăварас килет: иртнĕ çул следствии пайĕшĕн ура çине çирĕпрех тăмалли çул пулчĕ. Эпир хамăр ума лартнă тĕллевсене пурнăçларăмăр, çĕнĕ чикĕсем çĕнме никĕс хыврăмăр.

Пирĕн следствии пайĕ 2009 çулхи пуш уйăхĕнчен Етĕрнери хăйне валли уйăрнă çуртра вырнаçрĕ. Тăватă района пăхса тăратпăр эпир: Муркаш (следователĕ Л. Давлетшин), Етĕрне (И. Хайбуллин), Элĕк (А. Райков), Хĕрлĕ Чутай (Э. Щипцов).

Иртнĕ çул пирĕн следовательсем преступленисем пирки пĕлтернине 934 хутчен тĕрĕсленĕ. Тĕрĕслевсен пĕтĕмлетĕвĕсемпе 90 уголовнăй ĕç пуçарнă. Вĕсем пĕтĕмпе 128 уголовнăй ĕçпе ĕçленĕ, çавсем вăхăтĕнче татах 21 преступление уçса панă. Преступленисем тунишĕн явапла 97 çын тĕлĕшне уголовнăй 86 ĕçе суда ярса панă.

Уголовнăй ĕçсенчен 15-шĕ çынсене вĕлерни тата çынсен сывлăхне кӳнĕ сăтăр вилĕм патне илсе пыни, 11 тĕслĕх мăшкăллани, 8-шĕ влаç представителĕсем тĕлĕшпе вăйпа хирĕç тăни, должноçри çынсене «куç хупма» укçа пани 3, саккуна пăсса çын сывлăхĕпе пурнăçĕшĕн хăрушлăх кăларса тăратакан продукцие сутнă 11 тĕслĕх. Ĕçри тивĕççене пăснă пĕр милиционер тĕлĕшпе те пĕлтĕр уголовнăй ĕç суда кайрĕ.

Муркаш районĕпе илсен, кăтартусем çапларах. Çулталăк хушшинче пурĕ преступлени тунă 23 çын тĕлĕшпе 21 уголовнăй ĕç суда кайрĕ. Вĕсенчен 2-шĕ çынсене вĕлерни тата çынсен пурлăхне вăрлани 4 ĕç (вăл шутра должноçри çынсем тĕлĕшпе те), 3-шĕ влаç представителĕсем тĕлĕшпе вăйпа хирĕç тăни, должноçри çынсене «куç хупма» укçа пани 1, саккуна пăсса çын сывлăхĕпе пурнăçĕшĕн хăрушлăх кăларса тăратакан продукцие сутнă 1 тĕслĕх, 2-шĕ мăшкăлланăшăн, 5-шĕ граждансен конституцилле прависене пăснăшăн.

Пирĕн пай следователĕсем коррупципе çыхăннă уголовнăй ĕçсемпе те ĕçлерĕç. Вăл шутра ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсем, пушар чаçĕн ертӳçи тĕлĕшпе пуçарнă уголовнăй ĕçсем.

Следовательсен тăрăшулăхĕпе иртнĕ çул пĕр йăнăш йышăну та пулман. Çакнашкал кашни йăнăш хыçĕнчех конкретлă çынсен шăпи пулнине пирĕн ĕçченсем хăйсен ĕçĕнче малти вырăнта тытса пыраççĕ. Ку ырă ен кăçал та малалла тăсăласса шанатăп.

С. САВЕЛЬЕВ,
Етĕрнери районсем хушшинчи следствии пайĕн ертӳçи.

Сунарçăсен кĕтесĕ

Тискер кайăксене шута илетпĕр

Чăваш Республикинчи тискер чĕр чунсен тĕнчине пăхса тăракан, контрольлекен тата йĕркелесе пыракан патшалăх службин хушăвĕпе кăçалхи кăрлачăн 11-мĕшĕнчен тискер чĕр чунсене вĕсен маршручĕсем çинче учета илесси пуçланчĕ. Ку ĕç пуш уйăхĕн 5-мĕшĕччен пымалла.

2009 çулхи раштав уйăхĕн 23-мĕшĕнче Шупашкарта Чăваш Республикин территорийĕнче сунар кайăкĕсемпе чĕр чунĕсене хĕллехи вăхăтра шута илес ыйтусемпе канашлу иртрĕ.

Муркаш район территорийĕнче икĕ сунар хуçалăхĕ. Кунпа пĕрлех пĕрле усă курмалли участок та пур. Район территорийĕпе чĕр чунсен шута илнĕ 29 маршручĕ пур. Вĕсем пĕтĕмпе 204,8 километра тăсăласççĕ. Çак маршрутсем тискер чĕр чунсен хисепне тĕрĕс шута илсе пыма тата ăна кура сунар вăхăтĕнче вĕсене мĕн чухлĕ тытмаллине ирĕк пама çул уçать.

Чĕр чунсен хĕллехи шутлав маршручĕсем тискер чĕр чунсемпе сунар кайăкĕсен хисепне пысăкрах лаптăксенче те палăртма пулăшать. Çак мелпе нумай тискер чĕр чунсемпе сунар кайăкĕсен хисепне пĕр вăхăтрах палăртма пулать.

Сунар чĕр чунĕсене шута илесси ятарлă методикăпа пулса пырать. Унпа килĕшӳллĕн егерьсемпе опытлă сунарçăсем çирĕплетнĕ маршрутсемпе çӳресе тискер чĕр чунсемпе сунар кайăкĕсен талăкра хăварнă йĕрĕсене шута илсе пыраççĕ. Вăл е ку чĕр чун асăннă тăрăхра мĕн чуль нумайрах – унăн йĕрĕсем те маршрут çинче ытларах тĕл пулаççĕ.

Эпир туса ирттернĕ ĕçсене Мускавра «Тискер чĕр чунсемпе вĕсем пурăнакан вырăнсене тĕрĕслесе тăракан информаципе аналитика центрĕ» федераллă патшалăх учрежденийĕнче пĕрлештерсе пĕтĕмлетĕç. Çакă вара пире хамăра хупăрласа тăракан тавралăх çине çĕнĕлле пăхма, ăна аталантармалли çĕнĕ çулсем шырама май парĕ.

К. ГОРШКОВ, ЧР патшалăх сунарпа пулă хуçалăх службин специалисчĕ.